*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЫТЛАРИ КУН

44 (2456) №
Хакĕ ирĕклĕ
Эрнере икĕ хут тухать

2014,
çĕртме, 10

1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

**ВĂЙ ПАТĂР!**

# Гармонистовăн уйĕсем



*"Родина" хуçалăхра ертӳçĕсен пĕрле канашламалли пурах*



*"Новая жизнь" юлташлăх ертӳçи Галина Григорьева*

**Иртнĕ çул Етĕрнесем кашни гектартан 22 центнер тĕш тырă пухса кĕртсе республикăра мала тухнă. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Владимир Семенов кăçал та пысăк шанăçпа пурăнни çинчен пĕлтерчĕ. Вăл ертсе пынă ушкăн Сăр енчи темиçе хуçалăха çитсе уйсене пăхса çаврăнчĕ. Чапаев ячĕллĕ 6-мĕш лаша завочĕ пек пысăк лаптăк нихăш хуçалăхра та çук. Тулă уйĕ кăна 1030 гектар йышăнать. Хуçалăх ертӳçи Александр Арсентьевич Кузнецов кулленхи пурнăçра та, ĕçре те питĕ тĕплĕ çын. Çавăнпа çуллен тухăçлă тыр-пул туса илеççĕ. Агротехникăна лайăх чухласан тата минераллă удобренисене виçеллĕ хывсан çĕр пархатарне курса ĕненетĕн.**

– Акă, пăхăр, çурхи культурăсем чиперех шăтса тухнă, – тет Владимир Семенов. – Кăçалхи акана йĕркеллĕ ирттернĕшĕн манăн пур ертӳçĕпе агронома, механизаторсене тав тăвас килет. Маттур пирĕн çынсем. Паян çĕр нӳрĕк ыйтать. Пăчă, шăрăх. Çумăр çутарас тесе чӳк туса та пăхрăмăр. Хĕвел хĕртсе çунтарнипе çĕр типсе пыни пурне те пăшăрхантарать. 2010 çулхи типĕ çанталăк пире нумая вĕрентрĕ. Тĕш тырă пусси ăнса пулмасан та выльăх апачĕ çителĕклĕ хатĕрлессипе çине тăрса ĕçлемелле. Утă, сенаж, силос ытлăçитлĕ хывсан аптрамăпăр, ĕне кĕтĕвне сыхласа хăварăпăр. Сĕт-çу ытларах туса илни хуçалăхсен тупăшне ӳстерме май парать. Ял хуçалăх производствинче çак тĕп çул-йĕрсенчен пĕри. "Пучах", "Ленинская искра", "Ювановское" хуçалăхсенче çĕнĕ ĕне витисем тăваççĕ. Етĕрнери сĕт заводĕнче ку чухнехи хăватсем хута кайрĕç. Сиккипе мар та малаллах талпăнатпăр-çке.

Çĕре пушă вырттармаççĕ. Ульянов ячĕллĕ тата "Герой" хуçалăхсенчи ĕç-пуç япăхланнине кура ертӳçĕсене улăштарма йышăннă. Семенов каланă тăрăх – çĕрсене сухаласа акас шухăшлă çынсем пур. Пин гектар çинче тыр-пул е пахча çимĕç çитĕнтересси çăмăл мар пулин те çак ĕçе пуçăнакансем тупăнни – ырă пулăм.

2-мĕш стр. ➔

**ФЕРМЕР**

# Купăстасăр яшка шĕвĕ



*Купăста лартакансем*

"Фермер мар, чăвашла каласан хресчен Сантăрĕ пулатăп эпĕ. Япалана хăйĕн ячĕпе каламалла. Фермерсем вĕсем Германире, Америкăра, Голландире...", – çийĕнчех тӳрлетрĕ мана уйĕ-уйĕпе купăста лартакан Александр Васильевич Артемьев. Çĕрпӳ районĕнчи Вăрманкас Пайкилтре ĕçлесе пурăнать вăл. Пĕчĕк ялпа ун таврашĕнчи çĕрсен чунне сӳнме памасть тăвата ача ашшĕ: ĕçĕпе те, чунĕпе те чăн-чăн хресчен вăл. Ватлăх куçĕнчен пăхакан тăван ялĕн шăпи ăна хытах пăшăрхантарать. Ĕç тума çын кирлĕ, техника та унсăр чупаймасть. Ав, эпир килнĕ кун Александр Васильевича пулăшма хуларан кумĕ килсе çитнĕ. Тăванне вăл трактор рулĕ умĕнче улăштарать. Купăста лартмалли агрегат çинче вара – мĕн пĕчĕкрен ĕçре пиçĕхсе ӳснĕ пенсионерсем. Мухтать вĕсене фермер. Таврара унашкал ĕçлекенсем çук тет.

2-мĕш стр. ➔

**КĔСКЕН**

## Тĕнче ыр çынсăр мар

«Ачалăхшăн, ачалăх ячĕпе» ыр кăмăллăх марафонĕ вĕçленнĕ. Кăçал унăн пухмачне 9,5 млн тенкĕ (иртнĕ çул – 8,3 млн тенкĕ) пуçтарăннă. Ку укçа пĕтĕмпех ача-пăчана тĕрлĕ пулăшу кӳме кайĕ. Акцие пур район çынни те хутшăннă. Пăрачкавсем вара хастартарах пулни палăрать. Çавăнпа та Пăрачкав район администрацине 50 пин тенкĕлĕх сертификат парса чысланă. «Ачалăх меценачĕ» медале вара Республикăри стоматологи поликлиникин тĕп тухтăрĕ Вячеслав Бычков тивĕçнĕ. Кунта ĕçлекенсем марафон счечĕ çине 321 650 тенкĕ укçа куçарнă.

## Ăсталăх çăкăр ыйтмасть

Киров хулинче иртнĕ «Атăлçири ăнăçлă çемье» фестивальтен Чăваш Енри Фунтиковсемпе Адюковсен çемйи çĕнтерӳпе таврăннă. Конкурса федерацин Атăлçи округĕнчи 14 регионтан 24 çемье хутшăннă.

Фестивале хутшăнакансене Пĕтĕм Раççейри «Амăшĕн сăваплăхĕ» программăн медалĕпе чысланă. Унсăр пуçне Фунтиковсемпе Адюковсем уйрăм номинацисенче çĕнтернĕ. Сăмахран Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкри Адюковсем жюрие çăм атă йăвалама пултарнипе тĕлĕнтернĕ. «Пирĕн асатте-асаннесем те, атте-аннесем те çак ĕçпе аппаланнă, – тенĕ Любовь Адюкова çемье вăрттăнлăхне уçса. – Çак пуянлăха эпир упраса хăвартăмăр. Ăна ламран лама куçаратпăр».

Адюковсем халĕ çĕнĕ ăсталăха алла илнĕ: пĕчĕк çăм атăсем (сувенир валли) хатĕрлеççĕ. Çемье вĕсене жюрие те парнеленĕ.

Фестиваль гала-концертĕнче уява хутшăннисене Раççей халăх артисчĕ Дмитрий Маликов тата Ирина Грибулина юрăç, композитор саламланă.

**Валентина ПЕТРОВА.**

## Раççей шайĕнче çĕнтернĕ

Сахăр кăшманĕ акакан хуçалăхсем Раççей шайĕнче иртекен конкурса хутшăнма тăрăшаççĕ. Ăна ял хуçалăх таварĕ туса кăларакансен Союзĕ тата агропромышленноç комплексĕн регионти уйрăмĕсем (Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерстви пулăшнипе) йĕркелеççĕ. Конкурс кăтартăвĕсем тăрăх - сахăр кăшманĕ акакан чи лайăх предприятисен йышне Улатăрти И. Сергунинăн хресчен хуçалăхĕ тата Патăрьел районĕнчи "Исток" агрофирма кĕнĕ.

**Ирина ПАВЛОВА.**

## ÇАНТАЛĂК

| Шупашкарта | Вăхăт | 10.06 | 11.06 |
|---|---|---|---|
| Температура, °C | 2–4 сехетре | +17 | +13 |
| | 14–16 сехетре | +26 | +21 |
| Çумăр çăвать | | 🌧 | 🌧 |
| Атмосфера пусăмĕ, мм | | 738 | 748 |

# Гармонистовăн уйĕсем



*Рудольф Гармонистов фермер*

1-мĕш стр.

Эпир – Тури Ирçе тăрăхĕнче. Çав тери илемлĕ вырăнсем: юхан шывĕ те, вăрманĕ те юнашарах. Кĕтӳ кĕтмелли улăх-çаранĕ инçете тăсăлать. "Родина" (ĕç тăвакан директорĕ Владимир Иванович Тимофеев) чи нумай сĕт сунипе палăрнă. Агрономсем çу типĕ килнипе утă хакĕ вăйлă хăпарасси çинчен калаç-калаççĕ. "Ювановское" юлташлăх управляющийĕ Олег Иванович Федоров та тӳрех çавăн çинчен сăмах хускатрĕ:

– 2010 çул пирĕншĕн хăйне евĕр тĕрĕслев пулчĕ, – каласа парать вăл. – Утта икĕ пинпе Владимир тата Чул хула облаçĕсенчен илсе килеттĕмĕр. Кунсăр пуçне силос туяннă. Кĕрхи тулă акни çăлса хăварчĕ пире. Çухатусенчен сыхланас тесен кĕрхи культурăсен лаптăкĕ сахалран та 30 процент пулмалла. Пĕлтĕр 200 гектар акса хăвартăмăр. Ытларах тулăпа тата урпапа ĕçлетпĕр. Мĕн тарăнăш акмаллине кашни агроном хăй палăртать. Газон курăкĕн вăрлăхĕ – тупăш илмелли тепĕр çăл куç. Ун вăрлăхне Мускав фирми туянать. Куртăр ĕнтĕ, Сăр тăрăхĕнче йĕтĕн акакан хуçалăхсем те пур. Çĕннине вĕренмелле, хамăр патра сăнаса пăхмалла.

Хастар та пуçаруллă ертӳçĕсен йышĕнче – "Новая жизнь" юлташлăх пуçлăхĕ Галина Алексеевна Григорьева. Зоотехника вĕренсе тухнăскер пилĕк çул каялла хуçалăх тилхепине тытнă. Хальлĕхе пурте ăнăçлă пулса пырать тесе каламăпăр, çапах тăрăшать, аслисенчен нумай ыррине алла илет.

– 300 гектар çурхи тулă, 150 гектар урпа акса хăвартăмăр, клевер 80 гектар çинче ӳсет. Çак лаптăксене тăваттăн сухаласа акатпăр. Механизаторсен ячĕсене асăнам-ха: Геннадий Тихонов, Михаил Федоров, Валерий Васильев питĕ тăрăшуллă. Кирек епле техника хатĕрĕпе те ĕçлеме пĕлеççĕ. Михаил Григорьев ĕçе йĕркелесе пырать. Пĕчĕк мăйăрăн тĕшши тутă теççĕ, эпир хамăр пултараяслăха туйса илтĕмĕр. Эх, çумăр çусанччĕ çак эрнере, вара чун выртатчĕ.

"Герой" хуçалăх çĕрне арендăна илнĕ Юрий Самарин, Вăрманкас Етĕрне тăрăхĕнче тĕш тырă акса тăвакан Рудольф Гармонистов фермерсем те çумăр кĕтеççĕ-тĕр. Шăрăх хыççăн çумăрпа пĕрле асар-писер тăвăл килесси те шиклентерет вĕсене. Гармонистов уйĕсем вара чăннипех хитре. Ял хуçалăх министерствин тата Раççей ял хуçалăх надзорĕн специалисчĕсем ун ĕçне ырламасăр тӳсеймерĕç. Фермер та парăмра юлмарĕ:

– Пире тăрантараканни, вăй-хал параканни – Çĕр аннемĕр. Тӳрех пысăк лаптăк илмерĕм. Малтан 100 гектарччĕ, халь 400 ытла. Горчицăпа – çу кăларма какан сарă курăкпа – ĕçлесе пăхасшăн. Ман çемье хиртен кĕме пĕлмест. Ывăлсем ӳссе çитĕнчĕç, пĕри агротехникум пĕтерчĕ, пурнăçне ялпах çыхăнтарать пуль тетĕп. Пĕри те тепри хулана тарсан уйра кам ĕçлĕ? Çĕрпе аппаланма пĕлӳ кирлех. Эпĕ хăй вăхăтĕнче Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ. Халĕ ятарлă литература тупса вулатăп. Ырашпа тулă гектартан 39-45 центнер тухни те пулкаланă. Трактор, комбайн туянма банкран кредит илнĕ. Тӳлесе тататăн та каллех кивçене кĕретĕн. Тыр-пул ăнса пулсан кун-çула йӳнеçтеркелетĕн. Вырмара ял çыннисене те явăçтаратпăр. Халăхĕ ӳркенмест-ха. Укçине ĕçне кура тӳлетĕн.



*Чапаев ячĕллĕ 6-мĕш лаша завочĕн директорĕ Александр Кузнецов*

"Чебаково" юлташлăх уйĕсене те лайăх хак пачĕç тĕрĕслевçĕсем.

Уй-хир йышăнăвне район пуçлăхĕ Владимир Николаевич Кузьмин пĕтĕмлетрĕ:

– Çур акинче лайăх пахалăхпа ĕçлени тӳрех курăнать. Район акатуйĕнче чи маттуррисене чыслăпăр. Ял хуçалăх кăтартăвĕсемпе Етĕрнесем Чăваш Енре тĕслĕх пулса тăчĕç, çак шайран чакас марччĕ пирĕн.

**Вячеслав ГРИГОРЬЕВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Купăстасăр яшка шĕвĕ

1-мĕш стр.

Паян çывăхри вунă ялтан (вĕсем те сахал йышлăскерсем) вĕсене пуçтарма май килет-ха. Ыран, виçмине вара... "Мĕн тума ĕçлемелле манăн, ахаль те кашни кун ӳсĕр", – текенсен шучĕ ӳссех пырсан кам патне чупмалла?..

Юрĕ, ыранхи куншăн паянах кăмăла пăсар мар. Купăста, тен, ун чухне те чиперех лартăнĕ. Ялта ĕç аллисем çителĕксĕр чухне Артемьева йышлă ачи-пăчи пулăшĕ.

**– Çапла мар-и, Александр Васильевич?**

– Шанатăп. Ĕçĕн ытларах пайне техникăпа пурнăçласан та йыш кирлех çав. Уйрăмах купăста лартнă, ăна тасатса пуçтарнă чухне.

**– Мĕншĕн купăстана куç хывнă-ха эсир? Кунти çĕр çак пахча çимĕçшĕн юрăхлăран е ...**

– Килти хушма хуçалăхра 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнченех лартнă ăна. Паянхи пек (халĕ вăл 30 гектар çинче çитĕнет) нумай мар ĕнтĕ. Ытларах лартас – ун чухне çĕр илме йывăрччĕ. Маларах фермерсем çĕр илнĕ те кăштахран ăна типтерлеме пăрахнă. Хамăр ялтан вунă çухрăмраччĕ çав лаптăксем. Вĕсемпе усă курнă. 2007 çулта хамăр çĕрлĕ пултăмăр. Ытти пахча çимĕçпе танлаштарсан купăстапа ĕçлеме меллĕрех. Уйрăмах пухса кĕртнĕ чухне. Кĕркуннехи йĕпе-сапара, сăмахран, çĕр улми ани çине техникăпа кĕрейместĕн.

Паллах, "иккĕмĕш çăкăра" та ӳстеретпĕр эпир. Тырă та çитĕнет. Анчах вĕсене пусă çаврăнăшне улăштарма лартатпăр, акатпăр. Ытла сарлака ярса пуссан йĕм çурма пулать тенĕ ватăсем. Пĕрне лайăхрах туса илесчĕ.

**– Тĕрĕс. Тухăçĕ те пултăр, пахалăхĕ те ан хавшатăр, туянаканĕ те тупăнтăр. Ку таранччен лаптăка ӳстерсе пынă пулсан аптăрамастăр курăнать.**



**А. Артемьев (сылтăмри) трактористсемпе**

– Гектартан 50 тонна илетпĕр. Тухăçа ӳстерме пултаратпăр. 70, 80 е 100 тонна таранах. Шăвармалли агрегатсем пур. Куртăр пулĕ, лартнă чухне те техника шăварсах пырать. Малтанхи çулсенче кивĕ йышши "Сигма" агрегатпа усă курнă. Юлашки тапхăрта Италире туса кăларнă икĕ çĕнĕ тытăм вырнаçтартăмăр. Патшалăха тав: вăл шăвармалли хатĕр туяннă укçа тăкакне саплаштарать. Ку шута пăрăх та кĕрет. Малтан 30 процентне субсидиленĕ пулсан, халĕ – 50 процентне.

Çавах та купăста тухăçне ытлашши ӳстерме тăрăшмастпăр. Суту-илӳре ларутăру улшăнчĕ. Ĕлĕкрех пысăк купăстана килĕштеретчĕ туянакан. Халĕ хисепре – пĕчĕк е вăтам пуçли. Лавккасенче кăна мар, пасарта та çапла. Супермаркет йышши пысăк лавккасен витĕмĕпе çыхăннă çакă.

**– Ăçти лавккасемпе пасарсене вырнаçтаратăр-ха пахча çимĕçе? Чăвашах тăрантарать-и е инçетри туссене-и?**

– Ытларах Хусана ăсататпăр. Хули пысăк пулнăран кунта тавар кал-кал сутăнать. Малтанхи вăхăтра Коми республикине турттарнă. Сезонра 10 та хутланă. Пĕрремĕш хут улталанине те ас тăватăп. Тепрехинче пахча çимĕç базинче ĕçлекен пĕр ыр кăмăллă çын тавара кунта парса эсĕ нимĕн те ĕçлесе илейместĕн терĕ. Пĕтĕмпех пасара илсе тухма сĕнчĕ. Çул çинче те темĕн те курма тивнĕ. Виçĕм çул Челябинска ăсатнăччĕ.

Таçта та курма пулать пирĕн купăстана. Акă Хусанти 3-мĕш базăра кунта килекен пахча çимĕçне пахаласа конкурс ирттернĕччĕ. Пирĕн тавар чи лайăххи пулчĕ, нитрат сахаллипе палăрчĕ. Шкулсемпе ача сачĕсене те çитет пирĕн купăста. Тепĕр чухне ăна кăшт вараланнине пăхмасăрах туянаççĕ. Чи кирли – пахалăхĕ-çке.

Пасарта урăхларах йĕрке. Ав ирçесен купăсти пăхма, алла тытма илемлĕ. Вăл шăпах пасар валли лайăх. Эпир химикатсемпе ытлашши усă курмастпăр. Паллах, пач вĕсемсĕр, удобренисĕр уя тухнин усси çук.

**– Пахча çимĕçе тăван республикăра вырнаçтарма май çук-и вара?**

– Хамăр патра та сутатпăр, анчах сахал. Тĕслĕхрен, республикăра вунă тĕрме, пысăкскерсем. Вĕсене хамăр пахча çимĕçпе тивĕçтерме пулать. Анчах пултараймастпăр. Пире çывăха та ямаççĕ. Мускав таврашĕнчи рынока Беларуççем ярса илчĕç. Туса илекен продукцие хамăр патра вырнаçтарма услови туса парсан темĕн пекехчĕ.

**– Эсир тăрăшнине куратăп та темĕн пекех пулăшас килет. Çук, "çӳлте" вĕçме турри пӳрмен. Купăста лартакансем патнех таврăнар-ха. Лартмалли агрегат çĕнĕ пекех туйăнмасть.**

– Кивĕ йышшипе ĕçлеме меллĕрех. Хамăра кирлĕ пек йĕркелесе çитертĕмĕр. Çĕннисемпе усă курас тесен калчана кассетăсенче ӳстермелле. Капла тăкакĕ ытларах. Ир пулакан сортсене çĕнĕ агрегатпах лартрăмăр. 4-5 гектар çинче часах пулса çитмелле.

**– Калча çитĕнтерме темĕн пысăкăш теплица тунă пулĕ.**

– Килте вĕсем. Ытла пысăк тееймĕн. Вăхăтлăх усă курмаллисем майлă. Хăвăрт лартма, çаплах пуçтарма пулать. Вырăнтан вырăна куçарма та май пур.

**– Вăрлăха хăвăрах тăватăр-и е туянатăр-и?**

– Гибрид вăрлăх тума юрăхсăр. Акă "Валентина" сорт пур. Унăн вăрлăхне Италире хатĕрлеççĕ. Голланди сорчĕсемпе усă куратпăр. Вăрлăхĕ хаклă. Вĕсене пĕрчĕн шутласа сутаççĕ. Пĕрчи – 50 пус. Пĕр килограмĕ 100 пин тенке ларать. Ку 5 гектар лартма çитет. Вăрлăхшăн пайтах укçа кăларса хуратăн.

**– Çĕрпӳре сирĕнпе тупăшакан (конкурент) çук. Республикăра та купăста çитĕнтерекенсем ытла нумай мар пулĕ.**

– Ĕçлекенсем пур. Куславккари купăста çитĕнтерекен Семенова пĕлмен çын сайра ĕнтĕ. Пĕр вăхăт Вăрмарсем те тăрăшатчĕç. Кивĕ сортсемпе ĕçлетчĕç. Ирçесем Голланди сорчĕсем çине куçрĕç те вĕсен таварĕ япăхрах сутăнма тытăнчĕ. Элĕк районĕнче те купăстана пысăк лаптăксем çинче ӳстерекенсем пур.

**– Кăмăллăн калаçатăр. Çĕр çинче те кăмăлпа ĕçленĕн туйăнать.**

– Хамăн ĕç килĕшет. Ӳпкелешместĕп. Ачамсем йышлă. Вĕсем пурри – пуянлăх, телей.

**Ирина НИКИТИНА.**

# Ҫитӗнӳ куҫ умӗнче

**Кӑҫал шкулсенче чӑваш чӗлхипе литература пӳлӗмӗсен республикӑри конкурсӗ иртрӗ. Унта Елчӗк районӗнчи Ҫирӗклӗ Шӑхалӗнчи вӑтам шкул ҫӗнтерчӗ. Пӳлӗм ертӳҫи вара – Нина Аркадьевна Левая.**

Нина Аркадьевна асӑннӑ шкулта 2002 ҫултанпа ӗҫлет. Вӑлах – шкул директорӗн вӗренӳ енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ. «Шанса панӑ кирек хӑш ӗҫе те вӑхӑтлӑ, тирпейлӗ пурнӑҫлать Нина Аркадьевна», – терӗ Виктор Карчиков шкул директорӗ унӑн ӗҫ-хӗлне хакласа.

Республикӑра ҫӗнтернӗ пӳлӗмпе паллашма васкарӑм. Ыттисенчен мӗнпе илӗртӳллӗ-ши вӑл? Мӗнпе тӗлӗнтернӗ Ҫирӗклӗ Шӑхальсем жюри членӗсене?

Пӳлӗме пӗрре пӑхсах тивӗҫлӗ хак пама май пур. Ӑна тӗпченӗ май вӑрттӑнлӑх та уҫӑлать. Акӑ шкапра урокра мӗн кирлине пӗтӗмпех тупма пулать. Кашни япалан вырӑнӗ пур. Вӗсене классем, темӑсем тӑрӑх пайланӑ. Урок ирттерме пӗтӗм услови ҫителӗклӗ. Видеоматериалсемпе презентацисем те кунтах. Ҫӳлӗксем ҫинче – справочниксемпе словарьсем.

Кунтах лаборатори те вырнаҫнӑ. Вӗрентекенсем ӑна чӑвашла «лаҫ» теҫҫӗ. Ку пӳлӗмре уроксене хатӗрленме меллӗ. Сцена тумтирӗ те ҫакӑнтах. Ача-пӑча пултарулӑхне сӑнлакан папкӑсем те, хаҫат-журнал та. Пултарулӑх тенӗрен ҫакна палӑртмалла: 2008 ҫултанпа Ҫирӗклӗ Шӑхалӗнче «Поэзи ҫӑлтӑрӗсем» район фестивалӗ иртет. Ҫамрӑк сӑвӑҫсен хайлавӗсем кунта упранаҫҫӗ. Кӑҫал та фестивале районӗпе 83 ача хутшӑннине пӗлтерчӗ Виталина Митрофанова вӗрентекен. Вӗсен пултарулӑхне тӗрлӗ номинаципе хакланӑ. «Сӑвӑ ҫыракан ачасем чылай пирӗн шкулта. Вӗсене хавхалантарма пӗлмелле. Паллах, хӑш-пӗр сӑвӑра рифма ҫук, анчах шухӑшӗ ҫирӗп. Ҫавна май вӗсене айккине илсе хума васкамастпӑр, ачасемпе пӗрле ӗҫлетпӗр. «Пиҫсе ҫитнисене» «Елчӗк ен» тата «Тантӑш» хаҫатсене ярса паратпӑр. Ку енӗпе Нина Аркадьевна ятарлӑ кружок йӗркеленӗ», – кӑмӑллӑн сӑмахлать Виталина Геннадьевна.

Ҫулсеренех шкулта Акатуй ирттереҫҫӗ. Ҫак кун вӗренекенсем те, вӗрентекенсем те чӑваш кӗпи тӑхӑнаҫҫӗ. Асӑннӑ пӗлӳ ҫурчӗ Йӗпреҫ районӗнчи Пучинке шкулӗпе тачӑ ҫыхӑну тытать. Кунта ҫулсеренех «Чӑваш вӑййи» мероприяти иртет. Тухьяхушпу ӑсталассине те Йӗпреҫсенчен вӗреннӗ Ҫирӗклӗ Шӑхальсем. Ырӑ пуҫарӑвӑн малашлӑхӗ те ырӑ. Пӗр-пӗринчен вӗренни нимрен паха.

Конкурсра ҫӗнтернӗшӗн Ҫирӗклӗ Шӑхальсем мультимедиллӗ хатӗр илмелли сертификата тивӗҫнӗ.

**Валентина МАКСИМОВА.**

# Шут шӑрҫи алран кайман

Иван Васильевич Бурмистров «Красный партизан» хуҫалӑхра 46 ҫул ӗҫлет. Ҫак шутран 43 ҫул – тӗп бухгалтерта. «Шут шӑрҫипе шутласах кун-ҫула ирттертӗм, – тет вӑл. – Калькулятора та тинтерех ҫеҫ алла илнӗ. Компьютер патне вара алӑ пымасть».

Улатӑрти совхоз техникума пӗтернӗ хыҫҫӑн вӑл асӑннӑ хуҫалӑхра учетчикра ӗҫленӗ, пӗр вӑхӑт тӗп экономист та пулнӑ. Унта-кунта вӑй хурсан та шут шӑрҫине алӑран яман. «Виҫҫӗмӗш председательпе ӗҫлетӗп, – малалла сӑмахларӗ Иван Васильевич. – Пурте тӑрӑшуллӑ та пултаруллӑ пулчӗҫ. Ял ҫынни пухнӑ пурлӑха салатма тӑрӑшман. Укҫа улшӑниччен колхоз счечӗ ҫинче самай нухратчӗ, чылай техника туянма пултарнӑ эпир. Ара, ун чухне миллионер колхозсен шутӗнчеччӗ. Самана пире те тикӗслерӗ, ҫапах хуҫӑлмарӑмӑр. Ӗҫченсене шалупа вӑхӑтра тивӗҫтерме тӑрӑшатпӑр, ытти организаци умӗнче те парӑм ҫук. Ҫакӑ чи кирли. Хальхи вӑхӑтра пурнӑҫа хамӑрах саплаштарма пултарни те аван. Сӗт ҫунтармалли-сӗрмелли материалсен хакӗпе пӗр пулсан эпир ҫӑтмахра пурӑнмалла. Иртнӗ ҫул унӑн хакӗ ҫулла та питех чакмарӗ, ҫавна май лӑштах сывласа ятӑмӑр».


Иван Бурмистров

Хуҫалӑхри пӗтӗм хут унӑн алли витӗр тухнӑран пурне те пӗлет вӑл. Тен, ертӳҫӗрен ытларах та. Ҫӗнӗ техника пахалӑхӗ пӑшӑрхантарать ӑна. Кӑҫал туяннӑ сеялка акана хутшӑннӑ-хутшӑнман ванса ларнӑ. Ӑна тӳрлетме саппас пайӗсем туянма тӳр килнӗ.

Нумаях пулмасть Иван Васильевич 65 ҫул тултарнӑ. «Ӗнер менелникне уявланӑ пулин те паян ирех ӗҫре вӑл», – терӗ ӑна хакласа хуҫалӑх ертӳҫи Николай Иванов. Яваплӑха туйнӑран ҫак ӗҫре вӑрах вӑй хурать ватӑ. «Пенсие тухиччен сыватмӑша та, санаторие те кайса курман эпӗ. Халӗ сывлӑх канӑҫсӑрлантарма пуҫларӗ. Мӑшӑр та, ачасем те тивӗҫлӗ канӑва тухма сӗнеҫҫӗ», – кун-ҫулӗпе паллаштарчӗ вӑл.

Мӑшӑрӗпе вӗсем виҫӗ ача ҫуратса ӳстернӗ. Хӗрӗ Лариса ашшӗ ҫулӗпе кайнӑ, бухгалтерта тӑрӑшать. Ыттисем те ӗҫлӗ, ҫемьеллӗ, ача-пӑчаллӑ. Вӗсен йӑхне паян виҫӗ мӑнукӗ тӑсать.

«Цифрӑсемпе «ҫапӑҫса» ывӑнмарӑр-и?» – ыйтатӑп эпӗ шахвӑртса. «Ку ӗҫе хӑнӑхнӑ ӗнтӗ. Мӗн тӑвӑн?» – пулчӗ хурав.

Хӑйӗн ӗҫне пӗлсе, юратса пурнӑҫланӑран Иван Васильевича «ЧР тава тивӗҫлӗ экономисчӗ» ята парса чысланӑ. Вӑл ӑна тивӗҫлӗ.

**Валентина ПЕТРОВА.**
**Йӗпреҫ районӗ.**

# Чару кирлех

Ҫӗртме уйӑхӗн 1-мӗшӗнчен общество апатлану заведенийӗсенче (кафе, бар, ресторан, кофейня тата ыт. те) саккун тӑрӑх – пачах туртма юрамасть. Ҫавна май асӑннӑ заведенисенче пирус тӗпӗ валли ятарлӑ савӑтсем пулмалла мар. Табак туртакан тата туртман ҫынсем валли уйӑрнӑ залсене пӗрлештермелле: чӗлӗм тӗтӗмӗсӗр залсем тумалла. Бара е кафене кӗнӗ ҫӗре, ҫавӑн пекех туалетра пирус туртма юраманни ҫинчен ятарлӑ паллӑ вырнаҫтармалла. Табак изделийӗсене рекламӑлакан материалсем пачах пулмалла мар.

Саккуна пӑхӑнас тӗлӗшпе заведени ертӳҫисем яваплӑ. Кафере е ресторанра (шалта) пирус туртнӑшӑн чи пысӑк штраф виҫи – 90 пин (туртакан ҫынна – 1500 тенкӗ). Унта ятарлӑ паллӑ ҫук пулсан 60 пин тенкӗ кӑларса хума тивӗ. Сигарета рекламӑланӑшӑн – уйрӑм предпринимателе 25 пин тенкӗ, организаци-предприятие 600 пин тенкӗ штраф кӗтет.

Ҫавӑн пекех ҫак вырӑнсенче табак продукцийӗпе суту-илӳ тума юрамасть:

– вӗренӳ, культура, физкультурӑпа спорт, медицина, санаторипе курорт учреждениййӗсенче тата вӗсен территорийӗсенче, общество транспортӗнче, вырӑнти хӑй тытӑмлӑх тата патшалӑх влаҫ органӗсен ҫурчӗсенче;

– вокзалсенче, аэропортсенче, тинӗспе юхан шыв порчӗсенче, хӑна ҫурчӗсенче.

# Ҫӗклемӗ ахаль те йывӑр

Аптранӑ кӑвакал кутӑн чӑмнӑ тенӗ пек – эпӗ те шухӑш вӗҫне тухаймасӑр хаҫата ҫырма шут тытрӑм. Эпир, хресченсем, темӗн те тӳсетпӗр. Анчах укҫасӑр пурӑнаймастпӑр.

Манӑн шухӑшӑмпа, халӗ патшалӑх чухӑнах мар. Ҫапах мӗншӗн хӑш-пӗр ӗҫченшӗн укҫине хӗрхенет вӑл? Теприне вара ҫыххипех тыттарать. «Хресчен тӳсет, мӗнле те пулин пурӑнать», – теҫҫӗ пулӗ влаҫрисем. Ҫакӑ почтальонсене те пырса тивет. Ҫил-тӑмана, ҫумӑра пӑхмасӑр ял халӑхне хаҫат-журнал салатаҫҫӗ вӗсем. Паян салатас мар – ыран каллех хаҫат килет, пур пӗрех валеҫмелле. Хаҫат-журналсӑр пуҫне пенси укҫи те памалла. Ҫав вӑхӑтрах алран тулли хутаҫ каймасть. Почта таварӗсене мӗншӗн йӑтса ҫӳремелле вӗсен? Халӗ ялта кашни утӑмрах лавкка. Эрнесерен район центрӗнче пасар иртет. Ҫынсем мӗн кирлине унта туянаҫҫӗ. Автобус ҫӳрет – лар та кай.

Таварне йӑтса ҫӳрени ҫеҫ мар, почтальонӑн ӑна вырнаҫтармалла-ҫке. Мӗне пӗлтерет ку? Кам та пулин укҫасӑр асапланнипе шухӑшласа кӑларнӑ-ши ҫак пулӑма? Ял ҫыннин ахаль те пенси сахал. Тавар туянмасан – почтальона шел. Йывӑр ҫӗклемпе алли ывӑннӑ унӑн. Ҫак сӑлтава пулах ку ӗҫе вырнаҫмаҫҫӗ. Акӑ Комсомольски районӗнчи Асанкассинче почта салатакан тахҫантанпах ҫук. Унта ӗҫлеме никам та килӗшмест. Шалу та сахал. Хальхи вӑхӑтра 3,5 пин укҫа-и вӑл? Тавар валеҫмеллине кам шухӑшласа тупнӑ-ши? Ҫакӑнпа пенсионерсем те питӗ кӑмӑлсӑр. Почтальонсене укҫа ӳстерсе парсан кӑмӑллӑ ӗҫлӗччӗҫ. Вӗсен те ачи-пӑчи, ҫемйи пур-ҫке.

**Анна РОМАНОВА.**
**Комсомольски районӗ.**

**КУЛӐШ, ПУЛӐШ!**



## ЧӐВАШ НАЦИ ТЕЛЕКУРАВӖН ЭРНЕЛӖХ ПРОГРАММИ

**Тунти кун, ҫӗртме уйӑхӗн 16-мӗшӗ**
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЫЛТӐН ҪӲПҪЕРЕН» (6+)
19.00 «АВАН-И» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
19.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
20.00 «КАЧЕСТВО» (12+)
20.30 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.30 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
23.45 «КАЧЕСТВО» (12+)

**Ытлари кун, ҫӗртме уйӑхӗн 17-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
6.45 «ПО СУЩЕСТВУ» (12+)
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
19.00 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ» (0+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «БИЗНЕС СРЕДА» (12+)
20.30 «МОДНАЯ СВАДЬБА» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «БИЗНЕС СРЕДА» (12+)

**Юн кун, ҫӗртме уйӑхӗн 18-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
18.45 «ЯЛАН ЯНРА, ЧӐВАШ СӐМАХӖ» (0+)
19.00 «ҪИТМӖЛ ТЕ ҪИЧЧӖ» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
20.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.15 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
23.45 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)

**Кӗҫнерни кун, ҫӗртме уйӑхӗн 19-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮМАХӖСЕМ» (0+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
10.15 «VII ЧЕБОКСАРСКИЙ ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ФОРУМ. «РЕГИОНЫ РОССИИ – УСТОЙЧИВОЕ РАЗВИТИЕ». ПЛЕНАРНОЕ ЗАСЕДАНИЕ. ПРЯМАЯ ТРАНСЛЯЦИЯ.
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
19.00 «ЯШ ЧУХ, ҪАМРӐК ЧУХ»
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
20.30 «НЕУДЕРЖИМЫЕ» (12+)
20.45 «АКТУАЛЬНОЕ ИНТЕРВЬЮ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)

**Эрне кун, ҫӗртме уйӑхӗн 20-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.15 «ТӖПЛӖ КАЛАҪУ» (12+)
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
18.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
19.00 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
19.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
20.00 «НАОБУМ» (12+)
20.30 «VII ЧЕБОКСАРСКИЙ ЭКОНОМИЧЕСКИЙ ФОРУМ. «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)
23.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
23.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
00.00 «КРУГЛЫЙ СТОЛ» (12+)

**Шӑмат кун, ҫӗртме уйӑхӗн 21-мӗшӗ**
6.00 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИ КӐЛАРӐМӖ
6.30 «РЕСПУБЛИКА» ИНФОРМАЦИОННАЯ ПРОГРАММА
9.00 «НАШ КОНЦЕРТНЫЙ ЗАЛ» (12+)
9.30 «ОДИН ДЕНЬ С ПРОФЕССИОНАЛОМ» (12+)
10.00 «АСЛӐ НОВГОРОД ГОСПОДИН ҪИНЧЕН КАЛАНИ». ЧӐВАШЛА КУҪАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ПРАВИТЕЛЬСТВЕННАЯ СВЯЗЬ» (12+)
17.30 «ЗНАКОМЫЕ ЛИЦА» (12+)
18.00 «ОТКРЫТЫЙ РЕГИОН» (12+)
18.30 «ЮРӐСЕН ЮРРИ». КОНЦЕРТ (12+)

**Вырсарни кун, ҫӗртме уйӑхӗн 22-мӗшӗ**
9.00 «ТАРҪӐ». ЧӐВАШЛА КУҪАРНӐ ФИЛЬМ (12+)
17.00 «ЭХ, ЮРРӐМ, ЯНӐРА» (12+)
17.30 «НАОБУМ» (12+)
18.00 «ҪАВРА СӖТЕЛ» (12+)
19.00 «КӖМӖЛ САСӐ» КОНКУРСӐН ГАЛА-КОНЦЕРЧӖ (12+)

## УЙĂХ КАЛЕНДАРĔ

| Число, кун | | Çĕртме, 11 – юн кун | Çĕртме, 12 – кĕçнерни кун | Çĕртме, 13 – эрне кун | Çĕртме, 14 – шăмат кун | Çĕртме, 15 – вырсарни кун | Çĕртме, 16 – тунти кун | Çĕртме, 17 – ытлари кун |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| ХĔВЕЛ | тухать | 4.04 | 4.04 | 4.04 | 4.03 | 4.03 | 4.03 | 4.03 |
| | анать | 21.37 | 21.38 | 21.38 | 21.39 | 21.40 | 21.40 | 21.41 |
| Кун тăршшĕ | | 17.33 | 17.34 | 17.34 | 17.36 | 17.37 | 17.37 | 17.38 |
| УЙĂХ | тăхри | тулса пырать | тулса пырать | тулли уйăх (8.10) | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать | катăлса пырать |
| | кунĕ (12 сехет тĕлне) | 14-мĕш кун | 15-мĕш кун | 16-мĕш кун | 17-мĕш кун | 18-мĕш кун | 19-мĕш кун | 20-мĕш кун |
| | | Скорпион паллинче | Ухăçă паллинче | Ухăçă паллинче | Ту качаки паллинче | Ту качаки паллинче | Шыв тăкан паллинче | Шыв тăкан паллинче |

### «ПАХЧАÇĂ КАЛАВĔСЕМ» ЯРĂМРАН

# Тип шар

Инкек ĕнсе хыçтарать: пĕр çыпçăнсан тикенек пек хăпма пĕлмест. Сехметсĕр пурăнаймастăп çав.

Шар курасси виçĕм çул пуçланчĕ. Çуркунне никампа калаçмасăр-тумасăр пасарта вăрлăх çĕр улми туянтăм. Виçĕ кило. Яровизациленĕ: сип-симĕс. Чышкă пысăкăшскерсем. Кашни çинче вун-вун икĕ папак. Сутуçи – чăваш. Галстукпа. Калаçма ўркенмест. Питĕ тирпейлĕ виçсе пачĕ. Кўршĕрсене те калăр тет. Савăннипе сортне-мĕнне те ыйтмарăм. Хутаçа çĕклерĕм те – арăм патне киле кĕрсе тăмарăм – вĕçтертĕм пахчана.

Эрне каялла çĕр кăкăрĕ типшĕрсенех çĕр улми лартма хатĕрленĕ лаптăк канлĕн канать. Каçхи ăшă çумăр хыççăн тăпра пусăрăннă, пĕр муклашка курăнмасть.

Турă пулăштăр! Хутаçри çĕр улмине пĕр пысăк витрене силлерĕм те унта шыв тултартăм. Кăштах шўтĕр терĕм. Çĕр улмине касса вакламарăм: çаплипех лартас! Вăрлăх çителĕклĕ пуласси курăнчĕ. Хапхапа юнашар ларакан шыв цистернине шăвармалли шланга чăмтартăм. Чавнă шăтăка тўрех шыв тултарас, унта çĕр улми пăрахас терĕм. Çĕнĕ технологи!

Алла кĕреçе тытрăм та – вĕресе кайрĕ ĕç-пуç. Шăтăкĕ чавăнать, шывĕ тулать, вăрлăхĕ выртать... Эх, ма! Кўршĕсем куç илмеççĕ вĕт манран. Ик алă мар – те виççĕ, те улттăшпех. Арăм юнашар пулсан мĕнле савăнмалла. Кўршĕсем эп ĕçленине пăхса ик алăпа пĕççисене çапса тĕлĕннине нихçан курман вĕт.

Икĕ эрне те çитмерĕ пуль – çĕр улми пĕр тикĕс шăтса тухрĕ. Арăм дачăна килмессерен йăрансем хушшипе икĕ аллине çурăм хыçне тытса уткалама пуçларĕ. Утти мĕнлерех!

Çаплах пан улми Сăпасĕ те çитрĕ. Пирĕн çĕр улми ўсет те ўсет. Аврисем хĕвел çаврăнăшне хăваласа çитрĕç, унтан та çўлерех кармашаççĕ тата. Мĕн ку? Çынсем тахçанах çĕнĕ çĕр улми пĕçереççĕ. Аптрамалла: акă ме, çĕнĕ технологи сана. Чăтаймарăм, пĕр тĕмне кăларса пăхрăм. Шап-шурă тымарлă вăрлăх çĕр улми çеç çакăнса тăрать...

Арăма нимĕн те каламарăм, ывăнтăн пуль тесе киле кайма хушрăм. Хам вара хĕвел анасса, кўршĕсем киле кайса пĕтессе кĕтсе лартăм. Сасăсем лăплансан тин алла кĕреçе тытрăм. Эх, чавалатăп, эх, хиретĕп, çамка тăрăх тар юхать, куçа кĕрет. Çĕнĕ тĕмсем хушăнса пынăн туйăна пуçларĕ. Кĕреçе аври хуçăлса кайрĕ тата. Тепĕр кĕреçе те пурчĕ-ха. Çук, тупаймарăм. Помидор тĕмĕсем хушшинче те, хăмла çырли айĕнче те упалентĕм – çук.

Çĕр улми аврине алăпа тăпăлтарма пикентĕм. Пĕр купа пуçтарăнчĕ, улми çук. Каç пулттипе ăна пĕчĕккĕн вăрмана сĕтĕрме тытăнтăм. Çын курасран хăраса çичĕ-сакăр хутчен хутларăм вĕт. Сехре хăпатчĕ. Юлашкинчен пушаннă лаптăка кĕреплепе турасах тирпейлесе хăвартăм.

Ку – пуçламăшĕ çеç пулчĕ-ха. Тепĕр çул каллех çуркунне çитрĕ. Каллех пахча ĕçĕсем пуçланчĕç. Тислĕк сапаларăм, çĕре тăрăшса хусăкларăм. Пĕтĕм килйышпа помидорне, хăярне, кишĕр-кăшманне, кавăн-çарăкне – веçех лартрăмăр. Татах çур пахчана яхăн çĕр пушă выртать. Кунта мĕн лартмалла? Çĕр улми шутра мар ĕнтĕ. Пушă вырăн чуна çўçентерет. Ун çумĕпе иртнĕ чух янах шăмми сиккелесе выляма пуçлать. Ах, анчах.

Тепле çапла улттăри мăнук Катюша ырă канаш пачĕ. Пăрçа терĕ. Яшка пĕçерме мар, хутаççисем пулсан симĕсле çиме. Ятарласа виçĕ йăран турăм. Пăрçа вăрлăхне арăм туянчĕ, пĕр-икĕ талăк шывра шўтерчĕ. Чăн та, аван шўтернĕ: пурте сăмсаланнă! Лартасса та арăм хăех лартрĕ. Кашнине уйрăмшарăн, шĕвĕр пўрнепе пуса-пуса.

Пĕр инкек алăкран шаккасан, теприне кĕме хапха уç теççĕ. Анчах пур инкекшĕн те инке айăплă мар. Эй, хапхине уçасса та кĕтмест вăл. Пĕр эрне сыхларăмăр пăрçа шăтса тухасса. Йăрансем тăрăх ир пуçласа каçчен пăрчăкансем хўрисене вылята-вылята салтаксем пек хутлаççĕ. Речĕ-речĕпе тата. Хăйсем пăр-пăр, хўрисем лăп-лăп. Мĕн кирлĕ вĕсене? Мĕн шыраççĕ? Иртмессерен тусан мăкăрланса çĕкленет. Алăпа хăлаçланса хăвалатăн та пăрлатса вĕçсе хăпараççĕ те кўршĕри мунча тăррине лараççĕ. Кăн-кан пăхкалаççĕ те каллех йăран çине вĕçсе анаççĕ. Каллех каллĕмаллĕ уткалаççĕ.

Уйăх та иртрĕ. Пăрçа шăтса тухасса кĕтсе илеймерĕмĕр. Çум курăкĕ тапса тухрĕ: пиçен, куршанак, хурхух, шурут, хура мăян... Иртен-çўренсем тĕлĕнеççĕ. Çĕр мĕн-ма пушă выртать теççĕ. Пĕлтĕр тухăçлă çĕр улми лартса илтĕмĕр те кăçал çĕре кантаратпăр тетĕп. Вара пусă çаврăнăшĕ тесе хушса калатăп та – пĕр çын сăмах хушаймасть.

Тĕлĕнмелле, кашни инкек хăйне уйрăм-çке. Икĕ çул аптăраса пурăнтăм çапла. Хам шар курни çинчен çынпа ларса калаçма намăс. Шарламарăм. Арăмпа кăна хутран-ситрен аса илтĕмĕр. Мĕн усси? Вăл пĕтĕмĕшпех мана айăплать. Çук, эпĕ – тап-таса. Пахча çимĕç лартса ўстерме çĕрне мĕн тери чаплă хатĕрленĕ. Тислĕкне те хĕрхенмен. Хăмла сăрин шап-шурă кăпăкĕ пек çемçе тăпра. Мĕн каласси!

Пусă çаврăнăшĕ тесе кашни çул çĕре кантарса вырттараймăн. Кўршĕсем пурте ăслă-пуçлă çынсем. Кулма пуçлĕç – чарăнаймĕç те. Тупрăм ыратман пуçа ватмалли. Юлашкинчен шухăш вĕçне тухрăмах.

Кăçал кĕркунне Дмитрий кум (Митя тесен çилленет) аллă тултарать. Юбилей. Ăна селĕм чĕлĕм парнелес тетĕп-ха. Хăйĕн те пур. Пĕрмай пирус пуçне хуçа-хуçа тапакĕпе чĕлĕме авăрлать. Çăвартан кăлармасăр паклаттарать вара. Ну манăн питĕ хакли. Катминат чулĕнчен тунăскер. Испани маркипе. Çичĕ-сакăр çул шкапра йăваланса выртать ĕнтĕ, шăллăм парнеленĕ те. Хам туртмастăп, ачаранах çăвара хыпман. Чĕлĕмпе пĕрле табак çулçи парас тата. Хаклă хăнасем умĕнче миххине арăм çĕкленсе тухтăр. Вăт парне! Тен туртма пăрахĕ кум. Халĕ туртакансем пирки саккун хытă.

Килĕшмесĕр тăма йўтĕм çук. Арăм ахăлтатса кулса ячĕ. Кăмăлĕ çемçелчĕ, ирĕлсех кайрĕ. Лартас, лартас терĕ махорка.

Хăех пасара чупрĕ. Тăпра çĕклесе килчĕ. Махорка вăрри. Питĕ вĕтĕскере эрнене яхăн çăл шывĕнче шўтертĕмĕр. Савăтрах çулçă кăларать вĕт! Ĕлкĕреймерĕ. Икĕ ешчĕке акрăмăр. Çиелтен тăппра витрĕмĕр. Темиçе хутчен шывпа пĕрĕхрĕмĕр. Хамăр та сисмен, икĕ эрнерен ешчĕксенчен сип-симĕс калча курăнса кайрĕ. Шит пек ўссен, пакетсем çине уйăрса лартрăмăр. Ĕçĕ мăй таран. Тата пўлĕме кĕме май çук: куççуль юхтарать. Арăм мăкăртатма пуçларĕ: тутлă-тутлă тута шăмми, тула пăрахсан – йытĕ çимĕ...

Çу уйăхĕн варринче аран-аран пахчана илсе çитерсе лартрăмăр хайхи. Тирпейлĕ культура. Нихăш енчен тиркеме çук. Шăвармалла мар, çум курăкĕ те тухмасть. Чĕр чунсемпе вĕсен кайăксем патне пымаççĕ. Им-çам ыйтмасть. Пахчара хăй хуçа. Кўршĕсем те ун пирки ыйтса-тĕпчесе тинке кăлармаççĕ. Ўсет те ўсет чун йăпатмăшĕ. Ик-виçĕ хутчен Дмитрий кум килсе пăхрĕ. Савăнчĕ.

Кĕркунне те çитрĕ. Пахча çимĕçне веçех пухса кĕртрĕмĕр. Махорка çаплипех сип-симĕс ларать. Пĕр çулçи сарăхмасть.

Кўршĕсем пахчана çўреме пăрахрĕç. Канмалли кунсенче çеç килсе мунча хуткалаççĕ. Манăн та сезон вĕçлеме вăхăт. "Питĕ ăнăçлă çу каçрăмăр, мĕн палăртни пулчĕ, – савăнатăп ăшра. – Икĕ эрнерен Дмитрий кумăн юбилей. Ыран табак тунисене касса тирпейлес".

Тепĕр кун ирхине ирех хăйра, икĕ çĕçĕ, кантра йăтса антăм хайхи дачăна. Алăкран кĕретĕп те – йăрансем çап-çара, пушă. Васканипе ют пахчана лекрĕм пулĕ тесе ĕненмесĕр хытса тăратăп. Чĕтреве ертĕм. Куç йăнăшмасть: çурчĕ те, йывăçĕсем те хамăрăнах. Пĕлтĕр хуçнă кĕреçе аври те кунтах выртать.

Инкеке кĕтнĕччĕ, анчах пĕр каç хушшинче пуласса шутламанччĕ. Кум питĕ савăннăччĕ. Шалккă...

**Герман ЖЕЛТУХИН.**

### МУЗЫКА ИНСТРУМЕНЧĔСЕМ

# Шăхлич



Чăваш халăхĕн чи авалхи музыка инструменчĕсенчен тепри вăл – шăхлич. Ăна сывлăшпа вĕрсе, шăхăртса калаççĕ. Шăхличе йăмра туратĕнчен, çамрăк çăка е хăва вуллинчен, тăмран, тимĕртен тунă. Унăн пўрне пусмалли шăтăк виççĕрен пуçласа тăххăр таран пулнă. Калас пулать, шăхлич чăвашсен чи анлă сарăлнă музыка инструменчĕсенчен пĕри. Халĕ те кашни çуркунне ялти ачасем хăйсем тĕллĕнех шăхлич ăсталаса киленсе калаççĕ. Ытларах лирикăлла çемĕ янăрать, юрă кĕввисем сайра илтĕнеççĕ.

Шăхлич, шăпăр пекех, чăваш халăхĕн сăмах вĕççĕн çўрекен пултарулăхĕнче те, профессилле литературинче те паллă йĕр хăварнă. Вăл тăван тавралăха, çут çанталăка илем кўнĕ, салху пĕчченлĕхре чун йăпатмăш юлташ пулнă, унăн хуйхи-суйхине çурмалла пайланă. Шăхлич сассисĕр Чăваш çĕр-шывĕн пейзажĕ те самай чухăнрах курăннă пулĕччĕ. Сăмахран, Константин Ивановăн «Нарспи» поэмăри кĕске сыпăка илер-ха:

Çўлте, пĕлĕт айĕнче
Тăри юрри илтĕнет.
Çемçе курăк çийĕнче
Путек-сурăх сиккелет.
Хăй кĕтĕвĕ патĕнче
Ача шăхличĕ калать.
Хырăмĕ питĕ выçнипе
Силпи ялнелле пăхать.

Тăм шăхличсене халĕ те пасарсенче сутаççĕ. Вĕсем пĕчĕккĕ, пĕр-пĕр чĕр чун пуçĕ е кайăк евĕрлĕ.

Эпир ача чухне тĕрлĕ ўсен-тăран хăвăл тунинчен шăхлич ăсталаттăмăр. Сухан йăранне те тĕрĕслесех тăраттăмăр.

**Герман СПЕКТР.**

### ШЎТЛЕР-И?

Пулăран тавраннă мăшăрĕ арăмĕнчен шăппăн ыйтать:

– Кушак килте-и?

– Кĕр, ан хăра, эпĕ ăна лавккаран килька туянса патăм ĕнтĕ...

ОАО «ЧУВАШВТОРМЕТ»
Лицензия № ЧР 21/01/03 от 31.08.2001.
ЗАКУПАЕМ ЛОМ ЦВЕТНЫХ И ЧЕРНЫХ МЕТАЛЛОВ ДОРОГО.
Реклама
г. Чебоксары, Гремячевский проезд, 5 а.
Тел.: (8352) 63-42-12, 63-51-84.

### РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРЎСЕМ

#### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – **33** руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**335. Гравмассу, песок, щебень.** Доставка. Тел. 89050282225.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

**408. Керамблоки** 20х20х40 от производителя, цемент М-500. Т.: 36-26-23, 89033797768.

#### РАБОТА

**399. Приглашаем опытного механизатора** на сенокос – 25-30 т.р., предоставляем жилье (можно с семьей). Т. 8-927-998-82-27.

«ХРЕСЧЕН САССИ»
Обществăпа политика хаçачĕ
Индекс 54838
Учредителĕ – ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ

ДИРЕКТОР-ТĔП РЕДАКТОР – А.П. ЛЕОНТЬЕВ
Редактор – Е.Н. НИКОЛАЕВА (тел. 56-34-63)
Редакци адресĕ: Шупашкар, И. Яковлев пр., 13.
Телефонсем: директор-тĕпредактор – 56-00-67, тĕп редактор çумĕ – 62-04-54, пайсем – 56-34-63, 62-50-06, 28-86-68, реклама пайĕ тел./факс – 28-83-70. Факс (8352) 62-50-06

www.hypar.ru,
e-mail: atal-volga@mail.ru

Хаçата 2013 çулхи раштав уйăхĕн 10-мĕшĕнче Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсемпе массăллă коммуникацисен сферинчи саккунсене пăхăннине сăнаса тăракан службин Чăваш Республикинчи управленийĕ ПИ ТУ 21-00305 № регистрациленĕ.
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă хатĕр оригинал-макетран «Чăваш ЕН» ИПК» АОУ типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Шупашкар, И. Яковлев пр-чĕ, 13.

Графикпа 17 сехетре алă пусмалла.
17 сехетре алă пуснă.
Заказ 2094 Тираж 4380

* Рекламăпа пĕлтерўсем. Реклама тексчĕсемпе пĕлтерўсемшĕн вĕсене паракансем яваплă.